28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

(Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!)

1943 СЕНТЯБРЬ 8 ЮНКУН 178(6415) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАСАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 4-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂРАН

Сентябрĕн 4-мĕшĕнче пирĕн çарсем ДОНБАСРА ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, 15 километртан пуçласа 25 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 90 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра — ДЕБАЛЬЦЕВО хулипе пысăк чугун çул узелĕ, ЕНАКИЕВО хули, ГОРЛОВКА хулипе чугун çул узелĕ, НИКИТОВКА хулипе пысăк чугун çул узелĕ, ИЛОВАЙСК хулипе пысăк чугун çул узелĕ, КАЛИНИНСК хули, Сталино облаçĕнчи ЯМА район центрĕ, халăх пурăнакан СЕРЕБРЯНКА, РЕЗНИКОВКА, ТРОИЦКОЕ, ЛУГАНСКОЕ, ХАЦАПЕТОВКА, ОЛЬХОВАТКА ятлă пысăк пунктсем тата СОЛЬ, ПШЕНИЧНАЯ, НАТАЛЬЕВКА, АЛМАЗНАЯ, БАРЖАНОВКА ятлă пысăк чугун çул станцийĕсем пур. Ворошиловград облаçне нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен пĕтĕмпех ирĕке кăларнă.

КОНОТОП енче пирĕн çарсем çаплах ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, уйрăм участоксенче 15 километртан пуçласа 17 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 150 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра Чернигов облаçĕнчи район центрĕ КОРОП хули, Сумы облаçĕнчи УЛЬЯНОВКА тата ШТЕПОВКА район центрĕсем пур.

Пирĕн ХАРЬКОВРАН хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан çарсем халăх пурăнакан темиçе пункта, вăл шутра МЕРЕФА хулипе чугун çул узелне йышăнса илнĕ.

БРЯНСК хулинчен кăнтăртарахри районра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, 6 километртан пуçласа 10 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла йышăнса илнĕ.

СМОЛЕНСК енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Сентябрĕн 3-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 90 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 31 самолетне персе ÿкернĕ

СЕНТЯБРĔН 5-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂРАН

Сентябрĕн 5-мĕшĕнче ДОНБАСРА пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 120 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра АРТЕМОВСК хулине, ДЗЕРЖИНСК хулине, КОМСОМОЛЬСК хулине, ХАРЦЫЗСК хулине, МОСПИНО хулине, КРАСНОЕ, КАРЛОВКА, ЖЕЛЕЗНОЕ, НОВОЭКОНОМИЧЕСКОЕ, ТУРИ КРИНКА, АНАТРИ КРИНКА, ПАНТЕЛЕЙМОНОВКА, КОРСУНЬ, КИРОВ ячĕпе тăракан халăх пурăнакан пысăк пунктсене, АЛЕБАСТРОВАЯ, МАЙОРСКАЯ, СКОТОВАТАЯ, ЩЕВЕНКА, МОНАХОВО, АНАТРИ КРИНКА чугун çул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

КОНОТОП хулинчен кăнтăртарахри районра пирĕн çарсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă, уйрăм участоксенче 8 километртан пуçласа 14 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра МИХАЙЛОВСКИ ХУТОР ятлă пысăк чугун çул узелне, Орел облаçĕнчи ЛОКОТЬ тата СУЗЕМКА район центрĕсене, Сумы облаçĕнчи СЕРЕДИНА-БУДА район центрне йышăнса илнĕ.

КОНОТОП хули енче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, 6 километртан пуçласа 10 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра НЕХАЕВКА, ОКТЯБРЬСКОЕ, АТЮША, ПРОЛЕТАРСКОЕ, ДУХАНОВКА, ГВИНТОВОЕ, КЛЕПАЛЫ, ТЕРНЫ, ДЕРГАЧЕВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене йышăннă.

Пирĕн ХАРЬКОВРАН хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан çарсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ, хăйсен позицийĕсене чылай лайăхлатнă.

СМОЛЕНСК енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Сентябрĕн 4-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 92 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 70 самолетне персе ÿкернĕ.

И. В. Сталин юлташ Сергий митрополита, Алексий митрополита тата Николай митрополита йышăнни

Сентябрĕн 4-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ патĕнче йышăну пулнă. Йышăнура патриарх Местоблюстителĕ Сергий митрополит, Ленинград митрополичĕ Алексийĕ тата Украина экзархĕ—Киевпа Галици митрополичĕ Николайпа калаçу пулса иртнĕ.

Çав калаçура Сергий митрополит Совнарком Председательне çакăн çинчен пĕлтернĕ: православлă чиркĕве ертсе пыракансем хушшинче çак сывăхри вăхăтра Мускав тата пĕтĕм Россия патриархне суйлама тата патриархпа юнашар синод туса хума епископсен соборне пухма шутлаççĕ, тенĕ.

Правительство пуçлăхĕ И. В. Сталин юлташ çав шухăша кăмăлласа илтенĕ, ăна пурнăçа кĕртес ĕçре Правительство енчен чăрмавсем пулас çук, тенĕ.

Калаçу вăхăтĕнче СССР Совнарком Председателĕн Заместителĕ В. М. Молотов юлташ пулнă.

М. И. Калинин Голланди королевине Вильгельминăна вăл çуралнă кун ячĕпе янă саламлă телеграмма

Августăн 31-мĕшĕнче, Голланди королеви Вильгельмина çуралнă кун ячĕпе, СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин ăна ыра сунса çакăн пек телеграмма янă:

«Сирĕн Величество, эпĕ Сире Эсир çуралнă кун ячĕпе манăн хавасла салам тата ыра сунни йышăнма ыйтатăп.

Тата çавăн пекех пирĕн пĕр тăшмана—гитлерла захватчиксене хирĕç пыракан çапăçура эпĕ Голланди халăхне çитĕнÿсем тума ыра сунатăп».

Голланди королеви М. И. Калининăн саламлă телеграммине ответлесе панă телеграмма

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн М. И. Калининăн саламлă телеграммине хирĕç Голланди королеви Вильгельмина çакăн пек телеграмма янă:

„Господин Председатель, Эсир мана эпĕ çуралнă кун ячĕпе янă кăмăллă саламшăн тата ыра суннишĕн, çавăн пекех тата захватчиксене хирĕç пыракан çапăçусенче Нидерланди халăхне Эсир çитĕнÿсем тума ыра суннăшăн—эпĕ Сире чунтан тав тăватăп. Хам енчен советсен çарне пирĕн пĕр тăшмана хирĕç пыракан геройла кĕрешÿре малашне те чаплă çитĕнÿсем туса пыма пĕтĕм чĕререн ыра сунатăп".

Сентябрĕн 6-мĕшĕнчи оперативнăй сводка

Сентябрĕн 6-мĕшĕнче ДОНБАСРА пирĕн çарсем малалла ăнăçлăн тапăнса пынă, 15 километртан пуçласа 25 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра МАКЕЕВКА хулине, КОНСТАНТИНОВКА хулине, КРАМАТОРСКАЯ хулипе чугун çул узелне, СЛАВЯНСК хулипе чугун çул узелне, ДРУЖКОВКА хулине, ЧАСОВ-ЯР хулине, НИКОЛАЕВКА, РАЙ-АЛЕКСАНДРОВКА, АЛЕКСЕЕВО-ДРУЖКОВКА, НИКИФОРОВКА, ЩЕРБИНОВКА, ПЕТРОВКА, НОВОБАХМУТОВКА, НОВОСЕЛОВКА, ХАНЖЕНКОВО ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата ВАЛЬЯНОВКА, ВЕРОЛЮБОВКА, ДЫЛЕЕВКА, КРИВОЙ ТОРЕЦ, ФЕНОЛЬНАЯ ятлă пысăк чугун çул станцийĕсене илнĕ.

БАХМАЧ енче пирĕн çарсем малалла ăнăçлăн тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра КОНОТОП хулипе пысăк чугун çул узелне, НОВЫЕ МЛЫНЫ, БОЧЕЧКИ, КАЗАЦКОЕ, ВЯЗОВОЕ, ГРУЗСКОЕ, ПОПОВА СЛОБОДА, МИХАЙЛОВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата МЕЛЬНЯ, ДУБОВЯЗОВКА, ГРУЗСКОЕ ятлă чугун çул станцийĕсене илнĕ.

Пирĕн БРЯНСК хулинчен кăнтăр тарахра наступлени туса пыракан çарсем 15 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 90 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра РУЖНОЕ, КЛИНСКОЕ, БОРЩОВО, ШЕМЯКИНО, НОВАЯ ПОГОЩЬ, СТАРАЯ ГУТА, СТЕГАЙЛОВКА, РУДНЯ, ЖИХОВ, СТЕПНОЕ, ВОВНА, ШАТРИЩИ, АНТОНОВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене илнĕ.

ХАРЬКОВРАН хĕвеланăçнерехри тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн çарсем наступлени туса çапăçса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ, хăйсен позицийĕсене чылай лайăхлатнă.

СМОЛЕНСК енче пирĕн çарсем хăйсем йышăнса тăракан позицисене лайăхлатасшăн çапăçнă.

Сентябрĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 119 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 92 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Донбасра пирĕн çарсем малалла ăнăçлăн тапăнса пынă. Пĕр соединенин боецĕсем, тăшман çарĕсене татти-сыпписĕр пыра-пыра çапса, малалла куçса пынă. Артемовск хулине йышăнса илнĕ хыççăн пирĕн чаçсем Константиновка хули патне васканă. Тăшманăн хулана хÿтĕлекен танкĕсемпе пехоти контратака пуçласа янă. Хаяр çапăçу совет çарĕсен çĕнĕ çĕнтерĕвĕпе вĕçленнĕ. Пирĕн боецсем, таткăлăн пырса çапса, Константиновка хулине нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ техники нумай тăрса юлнă тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Малалла тапăнса пырса, пирĕн çарсем тата Краматорская хулипе чугун çул узелне, Славянск хулипе чугун çул узелне йышăнса илнĕ. Тепĕр соединенин чаçĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе Макеевка хулине вăркăнса кĕрсе кайнă. Урамсенче пулса иртнĕ хаяр çапăçусем хыççăн кăшкăла, пирĕн çарсем Макеевка хулине нимĕçсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Кун каçичченхи çапăçусенче тăшманăн 3000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 49 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. 62 хир туппи, хăй тĕллĕн çÿрекен 14 тупă пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Нумай çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Бахмач енче пирĕн çарсем малалла ăнăçлăн тапăнса пынă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла йышăнса илнĕ. Татса кĕнĕ районта тăшман васкаса пехотăпа танксен пысăк вăйĕсене илсе пынă. Сейм шывĕ урлă каçмалли каçăсемшĕн хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Нимĕçсем çак рубежра тытăнса тăрасшăн темĕн чухлĕ тăрăшнă пулсан та, наступлени туса пыракан совет çарĕсем çав каçăсене тытса илнĕ. Малалла куçса пырса, пирĕн боецсем халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăнса илнĕ, Конотоп хули патнелле пыракан вырăнсенче çапăçма пуçланă, каç пулса килнĕ тĕле нимĕçсен аркатса тăкнă чаçĕсен юлашкийĕсене хуларан хĕссе кăларнă. Конотоп хулипе чугун çул узелне тытса илнĕ хыççăн совет çарĕсем тăшмана малалла хăваласа пыраççĕ.

* * *

Пирĕн Брянск хулинчен кăнтăртарахра малалла тапăнса пыракан çарсем кун каçиччен халăх пурăнакан 90 пункта ытла йышăнса илнĕ. Комаричи хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединенин боецĕсем, вăрманлă тата шурлăхлă вырăнсенче кĕрешсе, нимĕçсене флангсенчен пыра-пыра çапса, каялла чакараççĕ. Паян пуринчен те хаяртарах çапăçусем халăх пурăнакан пĕр пункт районĕнче пулса иртнĕ. Ку пункта тăшман вăйлăн çирĕплетнĕ пулнă. Пирĕн çăмăллăн куçакан отрядсем кăнтăр енчен иртсе кайса çав пункта çавăрса илнĕ те, юханшыв урлă каçса, нимĕçсене тылран атакăланă. Пирĕн боецсем пырса çапнине чăтса тăраймасăр, тăшман пĕр йĕркесĕр каялла чакма пуçланă. Пирĕннисем нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. 7 тупă, 4 танк, 64 автомашина, боеприпассен тата инженерла пурлăхăн пысăк склачĕсене тата продовольствипе выльăх апачĕн 4 складне тытса илнĕ.

Михайловски хутăра йышăнса илнĕ хыççăн пирĕн çарсем, тăшмана хăваласа пырса, 20 километр таран малалла куçнă. Ку участокра кун каçичченхи çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна çити пĕтерсе тăкнă. 16 тупă, 43 миномет (вĕсенчен ултă кĕпçеллисем 6), 500 автоматпа винтовка ытла, боеприпассен тата япаласен 2 складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Харьковран хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Тăшман хăйĕн танкĕсен пысăк вăйĕсене контратакăсем тума кĕртсе ярать. Кун каçичченхи çапăçусенче нимĕçсен 35 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупписене персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Вăл танксенчен нумайĕшне пирĕн артиллеристсем çĕмĕрсе тăкнă.

Харьковран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, малалла куçса, хăйсен позицийĕсене чылай лайăхлатнă. Пĕр соединени чаçĕсем халăх пурăнакан пĕр пысăк пункта йышăнса илнĕ чухне нимĕçсен 500 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Çав çапăçура Рюмшин старши сержантăн тупă расчечĕ нимĕçсен «тигр» йышши йывăр танкне пĕтерсе тăкнă, ун хыççăнах, тÿрремĕн тивертсе, тепĕр танкăн гусеницине çĕмĕрсе тăкнă. Гварди сержанчĕ Смирнов тăшман пулеметчикĕ пытанса персе тăракан çурт патне шуса пынă та, граната вăркăнтарса, нимĕç пулеметчикне вĕлернĕ. Малалла шуса пырса, Смирнов нимĕçсен траншейине вăркăнса кĕрсе кайнă та, автоматпа персе, 5 гитлеровеца вĕлернĕ.

Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 22 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Смоленск енче пирĕн çарсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатасшăн çапăçнă. Дорогобуж хулинчен хĕвеланăçнерехре совет чаçĕсем тăшман танкĕсемпе пехотин хаяр контратакине сирсе ярса малалла куçнă та вăйлăн çирĕплетнĕ икĕ пункта йышăнса илнĕ. Ельня хулинчен кăтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсем темиçе хутчен те контратакăсем тунă. Анчах та вĕсен контратакисем ăнăçлă пулман. Тăшмана халран ярса, совет боецĕсем кăнтăрла иртсен нимĕçсене вăйлăн пырса çапнă та халăх пурăнакан темиçе пунктран хĕссе кăларнă. Çав çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынтан кая мар вĕлернĕ. Пĕр самолет, 11 тупă, 14 миномет, боеприпассен складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

Кун каçичченхи сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 49 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн катерĕсем Финн заливĕнче тăшманăн тральщикне шыва путарнă. Финн заливĕнче пирĕн летчиксем тăшманăн 3000 тонна водоизмещениллĕ транспортне, икĕ тральщикне тата хăвăрт çÿрекен баржине путарнă.

* * *

Калинин облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен подразделенийĕ тăракан пĕр яла сасартăк пырса тапăннă. Тăшман капла пулассине пачах та кĕтмен. Партизансем нимĕçсен 58 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пăрахнă, 4 грузовой тата пĕр çăмăл автомашина пĕтерсе тăкнă, трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр отрядри партизансем шоссе çулĕпе пыракан нимĕç колоннине аркатса тăкнă. Ку çапăçура 80 гитлеровеца вĕлернĕ е амантнă. Чĕррĕн тăрса юлнă нимĕçсем хĕçпăшалĕсене пăрахсах тарса пĕтнĕ. Совет патриочĕсем 5 автомат, 112 винтовка тата патронсем нумай тытса илнĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Наркомместпром предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи август уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ Наркомместпром предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура Шупашкарти горпромкомбинат, Шăхасанти райпромкомбинат, Канашри горпромкомбинат мала тухнă тесе йышăннă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Канашри горпромкомбинатран илсе, Шупашкарти горпромкомбината (Управляющийĕ Григорьев юлташ, горсовет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ) памалла тунă тата ĕçре палăрнă работниксене премилеме 15 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Шăхасан райпромкомбинатне (управляющийĕ Платонов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Скворцов юлташ) ăмăртура палăрнă работниксене премилеме пĕрремĕш преми—10 пин тенкĕ укçа памалла тунă.

Канаш горпромкомбинатне (управляющийĕ Шлапак юлташ, горсовет исполкомĕн председателĕ Белоусов юлташ) иккĕмĕш преми—5 пин тенкĕ памалла тунă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ август уйăхĕнче Элĕк, Вăрнар, Ишлей, Калинино, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Октябрьски, Советски, Çĕмĕрле, Чкаловски, Çĕрпÿ, Вăрмар, Етĕрне, Елчĕк, Тăвай райпромкомбиначĕсем лайăх ĕçленине палăртнă

Хĕрлĕ ялавлă заводра

Завод гудокĕ иккĕмĕш смена ĕç пĕтересси çинчен пĕлтернĕренпе чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Анчах цехра ĕç шавлама пăрахмасть, пачах урăхла, хăшпĕр станоксем хăвăртрах ĕçлеме пуçланине туятăн. Хĕрлĕ Çар çĕнтерÿсем тунипе хавхаланнă рабочисем тепĕр смена ĕçе кĕриччен продукци ытларах туса кăларма тăрăшаççĕ. Стахановец Алексей Закалябин юлташ паян виçĕ норма тултарнă. Вăл унпа çырлахмасть, мастера тата тепĕр сменăра ĕçлеме юлма хатĕрри çинчен пĕлтерчĕ. Стахановец Романов юлташ та виçĕ норма тунă. Вăл та хăйĕн юлташĕнчен юласшăн мар, пĕтĕм вăя хурса ĕçлет.

Алексей Закалябинпа Романов юлташсем пек стахановецсем халĕ «Большевик» заводра пĕрерĕн мар, вуншарăн шутланаççĕ. Вĕсен йышĕ кунран кун ÿссе пырать. Диффузорщик Шарасыкин юлташ ĕлĕк нормăна та тултарайман. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче вăл пачах урăхла ĕçлеме пуçларĕ, кашни сменărах нормăна ирттерсе тултарать. Нумаях та пулмасть ССР Союзĕнчи Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕ Шарасыкин юлташа «Отличник соцсоревнования» значок парса наградăларĕ. Чăваш хĕрĕ Матвеева халь выпарщица пулса ĕçлет. Çак профессине ĕçлеме вĕренме ăна çăмăл пулман. Анчах вăл йывăрлăхран хăраман, пĕтĕм вăя хурса вĕреннĕ, ĕçленĕ. Халĕ Матвеева юлташ та «Отличник соцсоревнования» значок илме тивĕçлĕ пулчĕ. Кун пек стахановецсем заводра сахал мар.

Заводри коммунистсем тухăçлăн ĕçленине палăрса тăраççĕ. Коммунистсем Долгов, Романов, Леонтьев юлташсем нормăна 350 процент таран тултараççĕ, хăйсен меслечĕсемпе ĕçлеме çамрăк рабочисене вĕрентеççĕ. Коммунист Медзяев юлташ ертсе пыракан бригада та заводра малта пыракан бригадăсенчен пĕри шутланать. Коммунистсем ертсе пынипе цехсенче стена хаçачĕсем тухаççĕ, кăтарту хăмисем организациленĕ. Вĕсем рабочисене çĕршывра пулса иртекен хыпарсемпе паллаштараççĕ. Çаксем вĕсем рабочисен ĕçри хастарлăхне çĕклеççĕ, тухăçлăн ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Завод коллективĕ фронтпа çĕршыва ытларах та ытларах продукци парса тăрать. Кашни уйăхра тенĕ пекех вăл хăйне панă заданисене ирттерсе тултарать. Июль уйăхĕнче завод плана пĕтĕм продукци туса кăларас тĕлĕшпе 129,4 процент, тавар туса кăларас енĕпе 112,4 процент тултарнă, çав вăхăтрах чăртавара 2,3 процент перекетленĕ, ĕç тухăçлăхне 22,4 процент ÿстернĕ. Заводра кашни рабочи нормăна вăтамран илсен, 133 процент тултарса ĕçлет.

Завод коллективĕ кăçал февральпе май уйăхĕсенче ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕн иккĕмĕш премине илме, март, июнь, июль уйăхĕсенчи ĕç итогĕсем тăрăх пĕрремĕш премине тата ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Халĕ коллектив Хĕрлĕ ялава малашне те хăйĕн аллинчех хăварма тăрăшса ĕçлет.

Х. ЛИСИН.

Çĕмĕрле, (хамăр корр.)

Пирĕн авиаци Бахмач, Нежин, Полтава, Красноармейское, Волноваха чугун çул узелĕсене тапăнни

Сентябрĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци нимĕçсен Бахмач, Нежин, Полтава, Красноармейское, Волноваха чугун çул узелĕсенче тăнă çар эшелонĕсемпе çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула пушарсем нумай тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Тăшманăн чугун çул составĕсемпе çар склачĕсем çуннă.

Çав каçах пирĕн авиацин пысăк вăйĕсем Смоленск енче тата Сумы хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр çĕре пухăнса тăнă нимĕç çарĕсене пыра-пыра çапнă.

Боевой заданирен пирĕн пĕр самолет таврăнман.

Колхоз авăн çапса пĕтерчĕ

СЕНТĔРВĂРРИ, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). „Красная Армия" колхоз (председателĕ коммунист Анкудинов юлташ), районри колхозсенчен пуринчен малтан тыр вырса пĕтерсе, государствăна тырă памалли çулталăкри плана пĕтĕмĕшпех тултарнăскер, сентябрĕн 5-мĕшĕнче авăн çапса пĕтерчĕ, тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртрĕ.

А. ВАХНИН,

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

ЧАПА ТУХНĂ ДИВИЗИСЕН ЯЧĔПЕ ХĔРЛĔ ОБОЗСЕМ

СĔНТĔР, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Сентябрĕн 5-мĕшĕнче вырсарникун районри колхозсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе ятарласа воскресник турĕç. Воскреснике районри пур колхозсем те хутшăнчĕç. Колхозсенчен килнĕ хыпарсем тăрăх, çак кун 72 колхоз пурĕ 681 лавпа Шупашкарти тата Етĕрнери хатĕрлев пункчĕсене 2100 центнер тырă леçнĕ. Уйрăм колхозсене илсен, Муркаш ялсоветĕнчи „Авангард" колхоз—46 лавпа 138 центнер, Пушкăрт ялсоветĕнчи „Новый путь" колхоз 24 лавпа—72 центнер, Калайкасси ялсоветĕнчи „Гигант" колхоз 21 лавпа—63 центнер тырă леçнĕ.

Т. ИВАНОВ.

ЕТĔРНЕ. Кĕçĕн Хăмаркка ял советĕнчи пур колхозсем те государствăна 1943 çулшăн тырă парса татрĕç. „Родина" тата Тельман ячĕпе тăракан колхозсенче халĕ колхозниксем кунĕн-çĕрĕнех уйхиртен кĕлте турттараççĕ, хĕрсех авăн çапаççĕ. Хĕрлĕ Çар вăрçă фрончĕсенче пысăк çĕнтерÿ туса пыни çине колхозниксем ĕç дисциплинине çирĕплетнипе ответлерĕç.

М. Кузнецова, Т. Романова, В. Андреева, А. Еремеева тата ытти нумай колхозницăсем кашни икшер-виçшер çыншăн ĕçлеме пуçларĕç

Е. УСМАН.

Çар çыннисен семйисемпе шкул ачисем валли

ÇĔРПУ, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Лĕпсер ялсоветĕнчи колхозниксем ырă ĕç пуçарчĕç. Вĕсен примерне йышăнса, районри ытти колхозсем те, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем пухнипе пĕрлех, çар çыннисен семйисемпе шкул ачисем валли ăшă япаласемпе кĕпе-йĕмсем пухма тытăнчĕç. Ку ĕçе рабочисемпе служащисем те активлăн хутшăнаççĕ. Паянхи кун тĕлне районра пĕтĕмпе 1.444 япала, 152 килограмм çăм, 16 метр пир, 2.720 тенкĕ укçа тата тырă нумай пухнă. Ку ĕç малалла пырать.

Б. АВКСЕНТЬЕВ.

Республика уйхирĕсенче

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇСЕМ СЕНТЯБРĔН 5-МĔШЕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПУЛСА ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Кĕрхи тата çурхи тĕш-тырăсем вырни	Капанна хывни	Авăн çапни
Вăрмар	100,0	49,6	35,1
Сĕнтĕрвăрри	100,0	51,6	32,8
Сĕнтĕр	100,0	40,7	28,8
Шăмăршă	100,0	74,8	56,8
Хĕрлĕ Чутай	100,0	41,8	27,6
Первомайски	100,0	30,6	20,9
Етĕрне	100,0	70,4	30,9
Куславкка	100,0	50,3	33,2
Вăрнар	100,0	50,4	24,7
Элĕк	100,0	39,5	22,9
Октябрьски	100,0	37,2	28,2
Красноармейски	100,0	40,3	24,0
Çĕрпӳ	100,0	38,1	27,2
Шăхасан	100,0	44,8	24,7
Шупашкар	100,0	41,5	26,8
Калинино	100,0	49,9	20,8
Елчĕк	100,0	50,4	24,3
Йĕпреç	100,0	49,5	34,5
Ишлей	100,0	39,3	27,8
Канаш	100,0	43,2	29,5
Комсомольски	100,0	51,1	21,5
Советски	100,0	46,9	24,3
Çĕмĕрле	100,0	61,2	30,2
Тăвай	100,0	40,0	18,2
Улатăр	96,1	76,0	32,8
Чкаловски	95,5	41,7	30,6
Кувакино	88,7	49,7	25,1
Пăрачкав	82,7	64,7	22,1
Шупашкар хули	100,0	76,8	42,1
ЧАССР тăрăх	99,1	47,5	27,6
Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пулнă	94,9	35,8	20,2

Елчĕк районĕнчи колхозсем тырă вырса, кĕраки туса пĕтерчĕç

ЕЛЧĔК, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсем те сентябрĕн 6-мĕшĕ тĕлне пур йышши тырăсене те вырса пĕтерчĕç. Мĕн пурĕ тĕштырăсене 31.891 гектар çинчен пухса кĕртнĕ. Вăл шутран комбайнсемпе 1460 гектар, кĕреплеллĕ çавасемпе 2.256 гектар, жнейкăсемпе 20.000 гектар ытла вырнă. Нумай колхозсенче халĕ кĕлте турттарса капана хывас ĕç чылай вăйланчĕ. „Хунав", „Красный Восток", „Петровка", Сталин, Молотов, Чкалов ячĕсемпе тăракан тата ытти нумай колхозсем кĕлтесене капана хывас ĕçе ăнăçлăн вĕçлерĕç.

Район сентябрĕн 6-мĕшĕ тĕлне кĕрхи тырăсем акмалли плана 102 процент пурнăçларĕ.

А. ЧЕРНОВ.

Вăрлăхлăх клевера çапма тытăнатпăр

ШĂХАСАН. Çурхи тырăсене вырса пуçтарнă хыççăн пĕр сехет те ахаль лармасăр, эпир вăрлăхлăх клевера вырма тытăнтăмăр. Пысăк тимлĕхпе ĕçлесе, вăрлăхлăх хăварнă пĕтĕм клевера хăвăрт вырса пухрăмăр, итем çине кĕртрĕмĕр. Государствăна тырă парса татнă хыççăнах вăрлăхлăх клевера çапма тытăнатпăр.

И. НЕСТЕРОВ,
Ухман ялсоветĕнчи „Ямурза" колхоз бригадирĕ

Комсомолецсен транспорт бригадисем хĕрӳ ĕçре

ОКТЯБРЬСКОЕ, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри комсомолецсемпе çамрăксем паттăр Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕрен те çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем çине патриотла ĕçсемпе ответлеççĕ.

«Фронта боеприпассем парса тăнă пекех государствăна тыртул парса тăрар!»—çак лозунгпа ĕçлеççĕ колхозсенче комсомолецсемпе çамрăксен транспорт бригадисем. Вăл бригадăсене чылай çĕрте пуçламĕш комсомол организацисен секретарĕсем ертсе пыраççĕ. Районра августăн 29-мĕшĕнче 199 лавлă хĕрлĕ обоз организацилесе, хатĕрлев пунктне 92 тонна ытла тырă леçнĕ. Сентябрĕн 5-мĕшĕнче, Пĕтĕм Тĕнчери Çамрăксен Кунĕ ячĕпе воскресник иртернĕ, государствăна 52 тонна тырă леçнĕ. «Заря» колхоз государствăна тата Хĕрлĕ Çар фондне тырă районра чи малтан парса татрĕ. «Красный танк», «Комбинат» колхозсем те кăçалхи çулшăн государствăна тырă памалли обязательствăна срокчен тултарчĕç.

А. ПЕТРОВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Уборка ĕçĕсене халех йĕркелесе ямалла

ЙĔПРЕÇ. Киров ялсоветĕнчи „Эконом", „Канаш", „Смычка" тата Киров ячĕпе тăракан колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсем чăтма çук кая юлса пыраççĕ. „Эконом" тата Киров ячĕпе тăракан колхозсенче çурхи тырăсем çурри ытла халĕ те уйрах лараççĕ. Тырă виçесĕр нумай тăккаланать. Кĕрхи тырăсем акас ĕçе вăрăма янă, государствăна тырă пама пуçламанпа пĕрех. „Смычка" колхоз государствăна тырă парас ĕçе начар мар организиленĕ, анчах кунта кĕраки чăтма çук вăрăма юлса пырать.

„Эконом" колхоз председателĕ Г. Максимов утă çулса пухас ĕçе кирлĕ пек ертсе пымарĕ. Çавна пула утă нумай çĕрсе пĕтрĕ. Халĕ тырă çĕрет. Çулса пăрахнă пăрçана темиçе кун хушши пуçтармасăр выртарнă, çавна пула пăрça ана çинчех шăтса кайнă.

Ялсоветĕнчи колхозсенче ĕç çапла юлса пыни Киров ялсовет исполкомĕ уборка ĕçĕсене начар ертсе пынине, тырпул тăккаланнишĕн ответлăха пачах туйманнине кăтартать. Уборка умĕнхи вăхăтра та уборка пуçланнă хыççăн та ялсовет исполкомĕн ларăвĕсенче тырпулсене пухса кĕртес ыйтăва пачах сӳтсе-явман. Киров ялсовет исполкомĕн председателĕ Уткина юлташ тата ялсовет исполкомĕн депутачĕсем „Эконом", „Канаш", „Смычка" тата Киров ячĕпе тăракан колхозсен уборка ĕçĕсене халех кирлĕ пек йĕркелесе ямалла.

К. СЕРГЕЕВ.

Ӳкерчĕк çинче: Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн чи пултаруллă бригадирĕ М. Е. Люлин. Унăн бригади колхозри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава илнĕ.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

ТЫРПУЛ ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА СРОКЧЕН ПУРНĂÇА КĔРТЕССИШĔН ТАТА СТАЛИН ЮЛТАША ПУРИНЧЕН МАЛТАН РАПОРТ ПАМА ПРАВО ИЛЕССИШĔН РАЙОНСЕМ ХУШШИНЧЕ ПУÇЛАННА СОЦИАЛИЗМЛА АМĂРТУ СЕНТЯБРĔН 5-МĔШЕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

Районсем	Миçемĕш вырăн йышăннă
Сĕнтĕрвăрри	1
Вăрнар	2
Канаш	3
Етĕрне	4
Шупашкар	5
Куславкка	6
Красноармейски	7
Çĕрпӳ	8
Вăрмар	9
Октябрьски	10
Йĕпреç	11
Шăхасан	12
Ишлей	13
Çĕмĕрле	14
Комсомольски	15
Советски	16
Улатăр	17
Сĕнтĕр	18
Первомайски	19
Калинино	20
Элĕк	21
Хĕрлĕ Чутай	22
Тăвай	23
Кувакино	24
Елчĕк	25
Чкаловски	26
Шăмăршă	27
Пăрачкав	28

Амăрту пуçланнăранпах пĕрремĕш вырăнта пыракан Сĕнтĕрвăрри районĕ сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли çулталăкри плана 56,9 процент тултарнă.

Пĕр кун хушшинче 72 тонна тырă панă

ЙĔПРЕÇ, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, районри 15 колхоз паян хĕрлĕ обозпа килсе государствăна 57 тонна тырă пачĕç. Кунсăр пуçне „Правда" колхоз 7 тонна, „Красный партизан" колхоз 5 тонна тата „Краснăй водник" колхоз тырă нумай пачĕç. Районĕпе паян государствăна мĕн пурĕ 72 тонна тырă пынă. Çакă вăл çулталăкри планăн 30 процентĕ пулать.

М. МАРКОВ.

Колхозри пиçмоносец

Эпир Патăрьелĕнчи почта уйрăмне кĕнĕ чухне Н. Кольцов юлташ хăйĕн сăран сумкине тин килнĕ хаçатсем, çырусем тата укça памалли извещенисем чиксе тăрать. Вĕсене сумкăна тултарчĕ те:

— Колхозниксем уйра тырă выраççĕ. Уя каятăп,—терĕ, Кипекçе ялĕнелле тухса утрĕ.

Н. Кольцов юлташ 60 çулта. Вăл Çĕрпӳ районĕнчи Кипекçе ялсоветĕнче пиçмоносец пулса 20 çула яхăн ĕçлет.

— Пĕркун пĕр харăс тĕрлĕрен переводсем 90 ытла пулчĕç, çавна кăнтăрларан пуçласа тепĕр кăнтăрлаччен салатса пĕтерчĕ вĕт,—тет почта уйрăмĕн начальникĕ И. Абашев юлташ.

Чăнах та, Н. Кольцов юлташ çав кун хăйĕн ĕçĕпе сахалтан та çĕр çын патне çитнĕ. Хăйĕн ĕçне вăхăтра пурнăçланă.

Çавăнпа ĕнтĕ Н. Кольцов пиçмоносеца колхозниксемпе колхозницăсем хисеплеççĕ.

И. МАЛГАЙ.

Транспорт валли вутă хатĕрлесси— куллен тумалли ĕç

Чугун çул транспорчĕ пирĕн çĕршывăн пурнăçĕнче паллă вырăн йышăнса тăрать. Унăн вырăнĕ отечественнăй аслă вăрçă тапхăрĕнче тата та ытларах çĕкленчĕ. Фронт валли вăрçă техники, хĕçпăшалсем, апатçимĕç вăхăтра, çителĕклĕ турттарса тăратмалла, социализмлă индустрипе ялхуçалăх ыйтăвĕсене тивĕçтерсе пымалла. Хĕрлĕ Çар çĕнтерӳсем тăвасси çав задачăсене пурнăçа кĕртнинчен нумай килет.

Чугун çул транспортне лайăх ĕçлеттерес тесен, чугун çул работникĕсем кăна тăрăшни çителĕксĕр, партипе советăн вырăнсенчи организацийĕсем енчен транспорта куллен пулăшу парса пыни кирлĕ. Вăрçа пула транспорт валли вырăнсенчех топливо хатĕрлес ыйту çивĕччĕн тухса тăчĕ. Кăçал пирĕн республикăра транспорт валли уйăхсерен вуншар пин кубометр вутă хатĕрлесе турттарса кăлармалла. Ку оборонăллă пысăк ĕç. Çак ĕçĕн ăнăçлăхне районсем ĕç тата туртăм вăйĕ кирлĕ чухлĕ уйăрса пани татса парать. Транспорт кашни кун ĕçлет. Апла пулсан, вутă хатĕрлессине те вăраха хăварма юрамасть, плана кашни кун тултарса пымалла тăвас пулать.

Анчах та партипе советăн районсенчи организацийĕсем транспорт валли вутă хатĕрлеме ĕç вăйĕ уйăрас тĕлĕшпе питех те сӳрĕк ĕçлеççĕ-ха. Хальхи вăхăтра вăрмансенче ĕç вăйĕ планпа пăхнă хисепрен çурри те ĕçлемест. Республикăри пĕр район та ĕç вăйĕ тăратас плана тултарман. Уйрăмăнах Сĕнтĕр, Пăрачкав, Хĕрлĕ Чутай районĕсем начар ĕçлеççĕ. Вĕсем ĕç вăйĕ уйăрса парас плана 20 процент та тултарман.

Вăрман хатĕрлекен организацисем те вăрманта ĕçлекенсене тухăçлăн ĕçлеме условисем туса паман. Ĕçе тĕрĕс организацилессишĕн кĕрешмеççĕ, социализмлă ăмăртăва сарман. Çавăнпа ĕнтĕ ĕçлекенсем хушшинче нормăна тултаракансем питех те сахал. Ĕç вăйĕ пĕрмаях улшăнса тăни те пысăк чăрмавсем кӳрет. Ку çитменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе вăрман хатĕрлекен организацисем çителĕклĕ тăрăшмаççĕ.

Çаксене пула ĕнтĕ транспорт валли вутă хатĕрлесси начар пулса пырать. Республикăри вăрманпромхозсемпе вăрман пункчĕсем июль уйăхĕнчи плана тултарман. Август уйăхĕнче те начар ĕçленĕ. Уйăхри плана 28 кун хушшинче хатĕрлес енĕпе 36,1 процент, турттарас енĕпе 24,7 процент çеç тултарнă. Вăрнар, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Улатăр вăрманпромхозĕсем питĕ кая юлса пыраççĕ.

Сентябрь уйăхĕ вăрман хатĕрлес тата турттарас ĕçсене тумалли паха вăхăт пулса тăрать. Ку уйăхра иртнĕ уйăхсенчи парăма витмелле кăна мар, сентябрь уйăхĕнчи плана та иртгерсе тултарса, тăваттăмĕш кварталта лайăх ĕçлеме условисем хатĕрлемелле. Çакна тумашкăн партипе совет организацисен ĕç вăйĕ çителĕклĕ таран уйăрса парас пулать. Вăрман работникĕсен ĕçе организацилессине, механизмсемпе усă курассине лайăхлатмалла. Рабочисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатасси çине хытă çаврăнса пăхмалла.

Чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесси—хуçалăхлă пысăк задача. Вăл задачăна куллен ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пымалла.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Эпир Сталин юлташăн „Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен" сырнă кĕнекине вĕренес ĕçе мĕнле йĕркелерĕмĕр

«Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» Сталин юлташ çырнă кĕнекен виççĕмĕш кăларăмĕ тухнă хыçăра Шупашкар ĕççыннийĕсем хавассăн кĕтсе илчĕç.

Сталин юлташăн кĕнекине вĕренес кăмăл питех те пысăк. Партире тăракан тата партире тăман интеллигентсем ăна алла илсенех пысăк тимлĕхпе вĕренме тытăнчĕç. Çакă вăл—большевикла пропагандăна анлăнрах йĕркелеме лайăх майсем туса пачĕ, çав вăхăтрах парти организацийĕсем умне пысăк ответлăх кăларса тăратрĕ.

Эпир, вĕренĕве лайăх йĕркелес тесе, кĕнекесем килсе çитиччен хатĕрленӳ ĕçĕсене тимлĕн турăмăр. Ку ыйтăва ВКП(б) горкомĕн бюровĕ августăн 10-мĕшĕнче хăйĕн ларăвĕнче сӳтсе-яврĕ. Августăн 16-мĕшпе 19-мĕшĕсенче партипе комсомол организацийĕсен секретарĕсене пухса семинарсем туса ирттертĕмĕр. Вĕсенче Сталин юлташ кĕнекин пĕлтерĕшĕ çинчен, ăна тĕплĕн вĕренес ĕçе мĕнле организацилесси çинчен сӳтсе-яврăмăр.

Сталин юлташăн кĕнекине вĕренес ĕçе тĕрĕс йĕркелес тата парторганизаци секретарĕсене çак тĕлĕшпе практикăллă пулăшу парас тесе, эпир пуçламĕш парторганизаци секретарĕсене—40 çынна яхăн ВКП(б) горкомĕн пропагандăпа агитаци отделне пĕчченшерĕн е пысăк мар ушкăнсемпе чĕне-чĕне калаçрăмăр, кăтартусем патăмăр.

Август уйăхĕн вĕçĕнче «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» Сталин юлташ çырнă кĕнекене вĕренес ыйтупа ВКП(б) горкомĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум анлă решени йышăнса, парторганизацисене çирĕп кăтартусем пачĕ. Çак ыйтупах ВЛКСМ горкомĕн пленумĕ те пулса иртрĕ.

Чылай пуçламĕш парторганизацисенче пленум пулаччен Сталин юлташăн кĕнекине вĕренесси çинчен парти пухăвĕсенче сӳтсе-явнă. Халĕ хулари парторганизацисем пленум решенийĕсене пурнăçа кĕртме тытăнчĕç.

Хулара Сталин юлташăн кĕнекине парторганизацисен секретарĕсем урлă кăна 3.600 экземпляр сарнă. Кашни парторганизацинех кĕнекене вĕренмелли плана панă.

Сталин юлташăн кĕнекине пирĕн кадрсем чылайĕшĕсем харпăрхăй тĕллĕн вĕренме кăмăл турĕç. Анчах ку ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасси çине шанма юрамасть. Харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсене контрольлесе, пулăшу парса тăрас пулать. Ку тĕлĕшпе тăтăшах юлташла калаçусемпе теориллĕ конференцисем ирттермелле. Кунсăр пуçне кашни парторганизаци секретарĕн Сталин юлташ кĕнекине вĕренекенсемпе уйрăмшарăн тĕл пулса калаçса, вĕсене вĕренӳри йывăрлăхсемпе чăрмавсене сирме вăхăтра пулăшас пулать. Сталин юлташăн кĕнекине харпăрхăй тĕллĕн вĕренес ĕçре партипе совет, комсомол, профсоюз тата хуçалăх организацисен руководителĕсем ыттисене хăйсем паха пример пама тивĕçлĕ.

Сталин юлташăн кĕнекине кружоксенче вĕренекенсен хисепĕ уйрăмах пысăк. Хулара паянхи кун тĕлне 100 кружок ытла ĕçлет. Çитес кунсенче татах вуншар кружок ĕçлеме пуçлать. Кружоксен ĕçне ВКП(б) Центральный Комитечĕн 1938 çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕпе килĕшӳллĕн организацилес пулать.

Кружоксенче харпăрхăй тĕллĕн ĕçлеме опыт çитмен юлташсем вĕренеççĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи практикăллă ĕçре пирĕн шăпах çамрăк работниксен çавăн пек йышĕ нумай ӳсрĕ. Кружоксем, паллах, ку тĕлĕшпе хăйсен хисеплĕ вырăнне йышăнаççех.

Кружоксем организациленĕ чухне пире чылай çитменлĕхсемпе тĕл пулма лекрĕ. Хăшпĕр çĕрте парторганизаци е комсомол организаци секретарĕсем, Сталин юлташăн кĕнекине вĕренекенсемпе тĕплĕн калаçмасăрах, вĕсене кружока çыра-çыра хунă. Çапла вара кĕнекене харпăрхăй ирĕкĕпе вĕренес принципа пăснă. Хăшпĕр çĕрте пĕлӳлĕх тĕлĕшĕнчен тĕрлĕ виçере тăракан рабочисемпе служащисене, вĕсем вĕренме пултарнипе пултарманнине шута илмесĕрех, кружока кĕртнĕ. Сталин юлташăн кĕнекине вĕренес ĕç çине çакăн пек пăхни тĕрĕс мар. Хăшпĕр çĕрте тата аслă шкул пĕтернĕ юлташсемпе пĕрле пуçламĕш шкулта вĕреннĕ е пачах вĕренмен юлташсене те пĕр кружоках кĕртни те пулнă. Кирлĕ мар çĕртенех вакă кружоксем организациленĕ: коммунистсене хăйсене уйрăм кружока кĕртнĕ.

Çак йăнăшсене эпир вăхăтра пĕтертĕмĕр.

Кружоксене опытлă пропагандистсем ертсе пыраççĕ, вĕсене ВКП(б) горкомĕн бюровĕнче çирĕплетнĕ.

Пропагандист кашни заняти умĕн семинарта пулать. Семинарта пулмасăр ăна заняти ирттерме ямастпăр. Эпир пĕррремĕш темăпа 4 семинар ирттертĕмĕр те ĕнтĕ.

Семинарсене квалификациллĕ лекторсем ирттереççĕ. Пĕр семинарта сăмахран, пирĕн лектор Мошнин юлташ Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ 1941 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче тухса каланă сăмаха вĕренмелли занятие мĕнле йĕркелемелли çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

Çакна май парткабинет ĕçне те çĕнетсе йĕркелерĕмĕр. Сентябрь уйăхĕнче парткабинет енĕпе пропагандистсем валли иккĕмĕшпе виççĕмĕш темăсем тăрăх 2 семинар ирттеретпĕр. Çавăн пекех „Кĕнекепе мĕнле ĕçлемелле", „Камсем вĕсем „национал-социалистсем?" тата ытти темăсемпе 4 хутчен консультацисем ирттерме палăртнă. Çавăн пекех Сталин юлташăн кĕнекине вĕренекенсем валли „Совет халăхĕн фашистла Германие хирĕç туса пыракан Отечественнăй аслă вăрçи—тĕрĕслĕхшĕн, ирĕклĕхшĕн пыракан халăх вăрçи", „Нимĕçсен вăрă-хурахла империализмĕ—Совет Союзĕн чи тискер тăшманĕ", „ССР Союзĕпе Англи тата США гитлерла Германие тата вĕсемпе пĕр каварлисене хирĕç кĕрешме тунă боевой союз" ятлă темăсемпе лекцисем туса ирттеретпĕр. Кунсăр пуçне ВКП(б) горкомĕн докладчикĕсем, пуçламĕш парторганизацисемпе комсомол организацисен секретарĕсем, агитколлектив руководителĕсем валли семинарсем туса ирттеретпĕр.

Чылай парторганизацисенче (Чăвашсоюз, Милици управленийĕ, НКВД, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод т. ыт. те) Сталин юлташăн кĕнекине вĕренме пирвайхи кунранах çине тăрса пуçăнчĕç.

Анчах хăшпĕр парторганизацисенче (Союзплодоовощь, Древпромсоюз) ку ĕçе сӳрĕк организаиленĕ. Вĕсем Сталин юлташăн кĕнекине вĕренес ĕçĕн пĕлтерĕшне халĕ те тивĕçлипе ăнланса илмен. Кун пек сӳрĕклĕхе малашне тӳссе тăма çук. Хулари парторганизацисен пурин те ку ĕçе халех большевикла йĕркелес пулать.

Сталин юлташăн кĕнекине ăнлантарса парас тĕлĕшпе агитколлективсен те тимлĕн ĕçлемелле. Вĕсен ку ĕç тулашĕнче хулари пĕр ĕççыннине те хăварас пулмасть. Кашни агитатор Сталин юлташăн выступленийĕсене хула çыннисене уççăн та витĕмлĕн ăнлантарса пама тивĕçлĕ, вĕсене Сталин юлташăн историллĕ кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртме, фронта вăйлăнрах пулăшса тăма мобилизацилемелле. Эпир ку тĕлĕшпе агитколлектив руководителĕсен семинарĕсене ирттерме шутлатпăр. Унта Сталин юлташăн уйрăм выступленийĕсене халăха ăнлантарса парас ĕçе мĕнле йĕркелемелли çинчен вĕрентетпĕр.

Сталин юлташăн кĕнекине ĕççыннисене ăнлантарса пани агитаторсене политикăллă-массăллă ĕçе малашне тата лайăхрах йĕркелеме, политикăллă агитацин витĕмлĕхне ӳлерех çĕклеме пулăшать.

„Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен" Сталин юлташ çырнă кĕнекене тарăнăн вĕренни—пирĕн кадрсене тăшмана хавăртрах çĕнтермелли çула кăтартса парать. Ку ĕç—политикăллă пысăк ĕç. Вăл пире хамăр ретсене çирĕплетме, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре усăллăрах пулса кĕрешме пулăшать.

С. ИСЛЮКОВ.
ВКП(б) Шупашкар горкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ.

Налог укçине срокчен тӳлеççĕ

Колхозниксем уйра тырă выраççĕ-и, итем çинче авăн çапаççĕ-и, — пур çĕрте те пулать Катраç ялсоветĕнчи налог агенчĕ Малыгин юлташ. Вăл колхозниксене Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсем çинчен каласа парать, фронта пулăшмашкăн государство умĕнчи парăмсене срокчен тӳлеме кирлине кăтартса парать. Унăн пархатарлă ĕçĕ сая каймарĕ. «Красные Яуши» колхоз членĕсем 1943 çулхи ялхуçалăх налогне срокчен тӳлесе татрĕç.

Налог укçине пухасси Ишлей районĕнчи ытти чылай ялсовечĕсенче те ăнăçлăн пырать. Кибечкасси ялсоветне кĕрекен колхозсем налог укçине пĕтĕмĕшпех тӳлесе татнă, Мамăш ялсоветĕнче 39 пин, Анат Кĕнер ялсоветĕнче 40 пин тенкĕ пухнă.

В. ГУСЬКОВ.

Ют çĕршывсенче

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: сентябрĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсен пысăк соединенийĕсем Берлина тапăннă. Хулана 20 минута хушши вăйлăн атакăланă. Çав хушăра хула çине 1000 тонна фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем пăрахнă.

Çавăн пекех тата тăшманăн Рейн облаçĕнчи, Çурçĕр Францири аэродромĕсемпе ытти об"екчĕсене те тапăннă.

Çав мĕнпур операцисенчен 22 бомбардировщик хăйсен базисене таврăнман.

Сентябрĕн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен самолечĕсем тăшманăн Кăнтăр Италири аэродромĕсене, çулйĕрĕсене тата позицийĕсене çĕнĕрен пыра-пыра тапăннă. Козенцăри тата Марина-ди-Катандзарори аэродромсене атакăланă.

Союзниксен самолечĕсем Сардини утравĕн кăнтăр пайĕнчи радиостанцисене атакăланă. Сентябрĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировщиксем Капуари тата Каподикинори аэродромсене тапăннă.

Англия хăйĕн тинĕс-çар флочĕн çухатăвĕсене саплани

ЛОНДОН, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). „Дейли геральд" хаçат пĕлтернĕ тăрăх, вăрçă пуçланнăранпа Англин 402 çар карапĕ пĕтнĕ. Вăл çухатусене халь пĕтĕмĕшпех сапланă, хăшпĕр йышши карапсем тĕлĕшпе ытлашшипех сапланă. Çак хаяр тинĕс вăрçинче, тесе çырать хаçат, Англин 5 линкор, 7 авианосец, 25 крейсер, 14 вспомогательнăй крейсер, 102 эсминец, 58 подводнăй лодка, 20 корвет тата 171 миннăй тральщик пĕтнĕ. 1939 çулхи сентябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне, урăхла каласан—çак вăрçă пуçланас умĕн, Англин 185 эсминец пулнă. Вăрçă пуçланнăранпа 102 эсминец пĕтнĕ пулин те, Англин тинĕс-çар флотĕнче хальхи вăхăтра 300 эсминец ытла. Вăрçă пуçланнă чухне Англин пĕр корвет та пулман, халĕ унăн 200 корвет ытла.

Редакцие килнĕ çыру

Заем облигацийĕсене хăçан салатса парать-ши?

ИШЛЕЙ. 1942 çулта «Правда» колхоз членĕсем 30 пин тенкĕлĕх военнăй заем çырăнчĕç. Укçине те пĕтĕмпех тӳлесе татнă. Колхоз председателĕ Н. Ефремов çак облигацисене паянхи кунччен те колхозниксене салатса паман. Хăçанччен тытса тăма шутлать-ши вăл çав облигацисене?

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СССР НАРКОМЗАГĔН МУСКАВРИ ЗООТЕХНИКУМĔ техникумра вĕренес текенсене илесси çинчен пĕлтерет.

15 çултан пуçласа 30 çула çитнисене йышăнаççĕ. 1-мĕш курса кĕрес текенсен вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнă чухлĕ пĕлмелле, 2-мĕш курса кĕрес текенсен вăтам шкулăн 9-мĕш е 10-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнă чухлĕ пĕлмелле.

Зоотехникум çак специальноçсене пĕлекенсене хатĕрлет: тискер кайăксене ĕрчетме тата ухута ĕçне пĕлекенсене, 2) мамăклă тирсене тата сăранпа çăм чĕр таварĕсене пĕлсе тăракансене.

Техникумăн общежитипе столовăй пур.

Вĕренме кĕрес текенсем зоотехникум директорĕ ячĕпе çак документсене ямалла: 1) автобиографи, 2) вĕренни çинчен калакан свидетельство, 3) хăçан çурални çинчен пĕлтерекен свидетельство, 4) сывлăх çинчен калакан справка, 5) çар тĕлĕшпе мĕнле тăнине пĕлтерекен справка (военнообязаннăйсемшĕн кăна).

Зоотехникум адресĕ çапла: гор. Балашиха, Московской области, Московский Зоотехникум Наркомзага СССР.

2—1

МУСКАВРИ И. В. СТАЛИН ЯЧĔПЕ ТĂРАКАН СТАНОКСЕМПЕ ИНСТРУМЕНТСЕН ИНСТИТУЧĔ 1943-44 вĕренӳ çулĕ умĕн института студентсем илесси çинчен пĕлтерет.

Институт çак специальноçсем тăрăх инженер-механиксем пулма вĕрентсе хатĕрлет: 1) металл касакан станоксем тĕлĕшпе, 2) инструментсен производстви тĕлĕшпе, 3) машинăсем тумалли ĕçĕн механически оборудованипе образецсен производстви, 5) виçекен приборсемпе машинăсем тăвас ĕç, 6) штамплассин технологийĕпе прессовальнăй оборудовани, 7) танксем тăвассипе вĕсене юсасси.

Институтра 5 çул вĕренмелле.

Института вĕренме кĕнĕ студентсем валли общежити пур, стипенди пулать, рабочи карточки параççĕ. Институт ОРС-ĕн столовăйĕнче апат çитереççĕ.

Института вĕренме кĕрес текенсен институт директорĕ ячĕпе кирлĕ документсем хурса заявлени ямалла.

Вĕренме кĕрес текенсене Институт чĕнсе илсен Мускава кĕртеççĕ.

Институт адресĕ çапла: Москва, Вадковский пер., д. 3-а. Московский Станкоинструментальный Институт имени И. В. СТАЛИНА.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.